24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ФЕВРАЛЬ
13
ЭРНЕКУН
37 (6062) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Хĕрлĕ Çарăн высши начальство составне Çар званийĕсем парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

Хĕрлĕ Çарăн высши начальство составĕнчи çак çынсене СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх туну çар званийĕсене парас:

ТАНКОВĂЙ ВОЙСКĂСЕН ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНТ ЗВАНИНЕ
Андрей Дмитриевич **Штевнева.**

ГЕНЕРАЛ-МАЙОР ЗВАНИНЕ
Борис Сергеевич **Антропова**
Василий Семенович **Викторова**
Григорий Трофимович **Данилова**
Александр Михайлович **Досина**
Максим Евсеевич **Козыре**
Якуб Кулиевич **Кулиева.**

АРТИЛЛЕРИ ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ
Александр Алексеевич **Вейса**
Андрей Степанович **Кузнецова**
Николай Кирьякович **Рыжине.**

АВИАЦИ ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ
Иван Иванович **Чмурана.**

ТАНКОВĂЙ ВОЙСКĂСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ
Василий Петрович **Ананьева.**

ÇЫХĂНУ ВОЙСКИСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ
Анатолий Евстихиевич **Караулова**
Алексей Григорьевич **Лапкина**
Алексей Иванович **Леонева.**

ИНЖЕНЕРНĂЙ ВОЙСКĂСЕН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ
Николай Иванович **Алексеева.**

ИНТЕНДАНТСКИ СЛУЖБĂН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ
Александр Ефимович **Волкова**
Федор Пахомович **Пагудăна.**

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 11-мĕш.

Фронтри боецсем валли парнесем

Мĕнпур Совет Союзĕнчи хуласемпе ялсенче, предприятисенче, учрежденисенче, колхозсенче ĕçхалăхĕсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа фронтри боецсем валли ăшă хăмăлла парнесем хатĕрлеççĕ.

Н-ски чугунçул станцийĕнчи коллективă, хăйĕн тăвĕне «Народный мститель» ятлă бронепоезда пухса фронта ăсатнăскер, халĕ фронтри боецсем валли парнесем хатĕрлет, хĕрарăмсем ăшă тумтирсем çĕлеççĕ.

Бугурусланри хулинчи почтăра халăх ĕçхалăхĕсенчен те нумай. Действующи армие посылкăсем ăсатас ĕçре нефтяниксем, строительсем, транспортниксем, хулари арăмĕсем килеççĕ.

Кемерово хулинчи ĕçхалăхĕсем Действующи армие ултă пин посылка ытла янă. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи боецсем Кемерово хулинче пурăнакан хĕрарăмсен патĕнчен пĕр пысăк посылкă тата çыру илеççĕ. Фронта Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи халăх пин кун тем тăвать.

...чухлĕ посылка кайса тăрать. Амур çинчи Комсомольскра çар иртнĕ январь уйăхĕ тумтирсем хăйсен боецсем валли 14 пин те 500 алăла ытла пухнă.

Фронтри боецсем валли парнесем хатĕрлес тĕлĕшпе пионерсемпе школ ачисем хастарланса ĕçлеççĕ. Алма-Ата хулинчи школсенче пĕренсем ачасем Действующи армие 400 посылка ытла янă. 46-мĕш №-лĕ школти 5-мĕш класра пĕренекен Маруся Бердина çапла çырать: «Халлă воин, тăван çĕршыва, пирĕн телейлĕ çамрăклăха сыхла»,— тенĕ. Хăшпĕр чухне ним пĕтмен çĕртен тĕлĕнмелли ĕç сиксе тухать. Çавăн пек посылкăпа та, 8-мĕш гвардейски дивизие пырса тухнăскере, темле майпа Бердин гвардеец парнеран. Бердин хăйĕн чухне Марусьăна çырнă: Маруся Мăйăр Маруся тĕрлесе тунă парне туртра курах халать. (ТАСС).

Фронтри боецсем валли ăшă тумтирсем ытларах хатĕрлер

СĔНТĔРВĂРРИ. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар чаçĕсем вăйлăн пыра-пыра çапăçнă, нимĕç фашисчĕсене парахса-парахса хăваласа пынă çĕре паттăр Хĕрлĕ Çар. Хĕрлĕ Çарăн фронтри пысăк çĕнтерĕвĕсем ĕçхалăхĕсене савăнтарса, ĕçре тата та пысăк çĕнтерусем тума хавхалантарать. Пирĕн социализмлă тăван çĕршыва хĕрлĕ çар хастар тăнă ку хăватне.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи ĕçхалăхĕсем тăван Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕршыв шухăшсем тумтир хатĕрлесе пачĕç та ку ĕçе халĕ те çивĕч сĕвленуне туса пыраççĕ. 1942 çул пуçламăшĕнче ĕçхалăхĕсенчен предприятисенче учрежденисенче тата колхозсенче фронтовиксем валли ăшă тумтирсем пухса хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисем çĕнĕрен пăхса тухрĕç. Комиссисем отчечĕсене илтнĕ хыççăн ĕçхалăхĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе малалла та туса пыма пĕр ушкăнăллăн йышăнса хăварчĕç. Унтанпа ĕнтĕ районта çапла ĕçхалăхĕсенчен сĕнĕ ватăклăн 49 куртка, 164 мулахха, 270 тир, 127 тутăрсем çăм, 54 мăшăр алшиш, 68 мăшăр çăматă, 142 мăшăр перчатка, 86 пар-пĕр тата ытти тĕрлĕ япаласем пухса парăç.

Нумай колхозсенче тата предприятисенче комиссисем, алшиш таччăн çыххăнса, государствăн çак пысăк ĕçне пăхса тухрĕç. Колхоз «Социализм» артельри ĕçхалăхĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕнĕрен 5 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм, 20 ватăклăн 7 куртка, 5 çĕлĕк, Полинкири килхузи заводĕнче ĕçлекенсем—10 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм, 12 çĕлĕк, 6 тир, 2 мăшăр алшиш та пачĕç. Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухас ĕç судоверфьре, лесхозра, «Знамя революции», «Трактор» тата ытти колхозсенче те пырать.

Çак ответлă ĕçе пурнăçлас тĕлĕшпе районри ял ĕçлекен комиссисем те пур-ха. Хăшпĕр çĕрте комиссисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçре пысăк çитĕнĕве туйса...

...илмен. Заготскот конторинчи, «Восток», «Труд», «Кушник» колхозсенчи комиссисем Хĕрлĕ Çар кунне ăша тумтир. Январьн 1-мĕшĕнче пусласа мĕн пурĕ те 4 мăшăр кĕпе-йĕм, ватăклăн 8 пар куртка, ватăклă 2 шалавар, 3 çĕлĕк çеç пухнă. Вырăнти комиссисем Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем тумтирсем ытларах та ытларах хатĕрлесе ĕçе малалла та туса пымалла.

Г. РЯБИН.

* * *

ВĂРНАР. Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç паттăрăн çапăçакан Хĕрлĕ Çарăн боецĕсене пулăшас тесе, районри ĕçхалăхĕсем тумтирсем ытларах та ытларах хатĕрлессипе тăрăшаççĕ. Ку енĕпе ĕçлекен районри комисси çинчен январь уйăхĕнче 160 килограмм çăм, 355 тир, 66 çăм перчатка, 57 носки, валенке 16 брюки, 8 мăшăр ăшă кĕпе-йĕм, 20 çĕлĕк, 16 мăшăр çăматă, 6 кĕрĕк пинжак пырса пынă. Патриотла çак ĕçре пысăк ĕçхалăхĕсем Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем 1941 çулта 11 кĕрĕк пиншак, 19 мăшăр çăматă, 27 тир, 8 çĕлĕк, 109 мăшăр алшиш, 43 мăшăр пир тăла, 75 мăшăр чăлха, 38 алшиш, 56 мăшăр кĕпе-йĕм, 22,7 килограмм çăм, 73 минтер пичĕсем, 21 мăшăр çăм тăла, 13 простыня панă. Вĕсемех боецсене январь уйăхĕнче 5 кĕрĕк пиншак, 8 мăшăр çăматă, 7 çĕлĕк, 10 носки, 6 мăшăр кĕпе-йĕм, 3 мăшăр алшиш пухса пулăшрĕç.

Ăшă тумтирсем пухас ĕç Зеленовкăри Ленин ячĕпе тăракан, Волонтери «Волонтер», Авруйри «Авруй», Одиковăри «1-ое Мая», Мамалайри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче те аван пырать. Авруй колхозĕн членĕсем, çăмахран, пухса панă. Çак кунсенчех вĕсем 9 тир, 2 килограмм çăм, 20 мăшăр перчатка, 2 мăшăр алшиш, 3 мăшăр перчатка, 6 метр пир, пĕр çĕлĕк пачĕç.

В. МАКСИМОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 11-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противникăн контратакисене сирессире пăрахса, наступленилле çапăçусем туса пынă тата çĕнĕрен малалла куçнă.

Февралĕн 10-мĕшĕнче нимĕçсен 12 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

Февралĕн 11-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 2 самолетне персе антарнă.

* * *

Февралĕн 10-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 6 танкне, 20 орудине, 9 бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 60 лавне, зенитнăй пулеметсен 15 точкине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ. Противник пехотине 3 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Сиязов юлташ командир пулса ертсе пыракан гвардейски чаçăн подразделенийĕсенчен пĕринчи красноармеецсем (Хĕвеланăç фрончĕ) тăшманăн чаçĕ каялла чакакан çула йышăннă та нимĕçсенне 2 танк, 4 оруди, 3 миномет, танксене хирĕç печелли 2 пăшал, 6 автомашина, продовольствипе çар пурлăхĕсем тиенĕ 100 лав тата ытти трофейăсем те нумай тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 100 çын ытла вилнĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн кавалери чаçĕ противника каялла хăваласа тытăннă, тăшманăнне 7 автомашина, 3 миномет, 5 пулемет, автоматсемпе винтовкăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Старший лейтенант Савченко ертсе пыракан гвардеецсен группи тăшманăн 7 ДЗОТ-не çавăрса илнĕ те вĕсем çине гранатăсем çыххисем ывăтса сирпĕнтерсе янă. ДЗОТ-сенче пулнă гитлеровецсем пурте пĕтнĕ. Гвардеецсен хăюллă ĕçĕ пирĕн стрелковăй чаçа ăнăçлăн малалла куçма май панă.

* * *

Яков Земзюлин сержантăн оруди расчечĕ хăйĕн орудине уçă позицие илсе тухнă та тӳррĕн тĕллесе персе тăшманăн темиçе ДЗОТ-не пĕтерсе тăкнă, 16 огневой точкине пусарса лартнă тата боеприпассен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен отрячĕсем январь уйăхĕнче, туллимар даннăйсем тăрăх, Гитлерăн 1.400 салтакне тата 62 офицерне пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем противник тылĕнче боеприпассен 8 складне, темиçе поезда взрыв туса сирпĕнтернĕ, нимĕçсен 1 самолетне, 8 танкĕпе танкеткине, 2 зенитнăй орудине, 147 автомашинине, 2 тягачне боеприпассем тиенĕ прицепĕсемпе пĕрлех, 2 радиостанцине пĕтерсе тăкнă тата çыхăну линине темиçе вырăнта татнă.

* * *

Нимĕçсен 183-мĕш пехотнăй дивизийĕн 351 полкĕнчен тыткăна лекнĕ ефрейтор фашистла партин членĕ Эдуард Герберт çапла каласа панă: «Салтаксен шухăш-кăмăлĕ пусăрăнчăк. Нимĕçсен çарĕ пысăк çухатусем тӳсет. Юлашки 3—4 кун хушшинче, вилнисемпе аманнисене тата тыткăна лекнисене пĕрле шутласан, пирĕн рота 110 çын çухатнă. Халĕ ротăра 40 салтакран ытла юлман. Пире ку тарана çитсе те ăшă тумтирсем памарĕç. Пире: Германире ăшă тумтирсем пухаççĕ, терĕç. Анчах та ку тарана çитсе пирĕнтен никам та перчатка та пулин илмен».

* * *

Сталино облаçĕнчи Ямы поселокĕнчен каялла чакнă чухне нимĕçсен тискер кайăкĕсем советăн нумай гражданĕсене персе тата асаплантарса вĕлернĕ. Вырăнти организацисен представителĕсемпе поселокра пурăнакансем акт çырнă. Актра çапла каланă: М. С. Шепотько гражданкăн картишĕнче нимĕçсем тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ В. П. Дъяченко, Ф. Д. Кравченко, Я. Ф. Иваненко, Е. И. Олейник, Н. П. Кравченко виллисене тупнă. Гитлеровецсем хăйсен жертвисен пичĕсене çĕмĕрсе пĕтернĕ, куçĕсене кăларса илнĕ, янахĕсене аркатнă. Пĕр виллĕн пуç шăммине ватнă, кăкăрĕ çинче çĕçĕпе чиксе суранланă паллă пур.

* * *

Текстильнăй машиностроенин инçетри тыла куçарса кайнă завочĕсенчен пĕри минометсем тума тытăннă. Çĕнĕ производствăна вĕренсе пырса, рабочисемпе инженерно-технически работниксем задание чылаях ирттерсе тултараççĕ. Тимĕрçĕ Гортанов сменăра 5 норма тултарать, Комосов, Шпырев, Кореневкин юлташсем 2-шер норма тултараççĕ. Хĕрлĕ Çар валли завод программăран ирттерсе икĕ дивизи валли минометсем туса кăларать.

Февралĕн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Кученев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Хĕвеланăç фрончĕ) тăшманăн тĕрлĕрен çар пурлăхĕсем тиенĕ 400 лавран тăракан обозне тытса илнĕ. Обоза сыхласа пыракан вуншар салтаксемпе офицерсене тыткăна илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Исаков юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри боецсем нимĕçсене Л. ялĕнчен хăваласа кăларнă тата танксене хирĕç печелли 5 оруди, 8 пулемет, 4 миномет тытса илнĕ.

* * *

Капитан А. Чернявский юлташ командир пулса ертсе пыракан саперсен подразделенийĕ, пирĕн стрелковăй чаçăн наступленилле операцийĕсене пулăшса пырса, темиçе кун хушшинче нимĕçсен пине яхăн минине тата 50 фугасне шыраса тупса сиенсĕрлетнĕ.

* * *

Политрук заместителĕ Крючков юлташ Воиново ялне чи малтан çĕмĕрсе кĕнĕ те ручной пулеметран персе тата гранатăсем ывăтса тăшманăн 17 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Пирĕн 3 боецран тăракан разведчиксен группи лейтенант Носов ертсе пынипе тăшманăн разведчикĕсене тĕл пулнă. Совет разведчикĕсем 17 белофина вĕлернĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕн нимĕçсем йышăнса илнĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Г. юлташ ертсе пыракан отрячĕ тăшманăн фронт линийĕ патнелле куçакан колонни çине тапăннă та 40 салтака, 3 офицера тата 8 жандарма вĕлернĕ. Партизансем нимĕçсенне винтовкăсемпе боеприпассем тиенĕ 20 грузовой автомашина, зенитнăй установка тата халăх пурăнакан çывăхри пунктра вырнаçнă продовольстви складне тытса илнĕ.

* * *

Нимĕç салтакĕ Гельмут Мершер çумĕнче вăл хăйĕн тăванĕсем патне яма ĕлкĕреймен çыръва тупнă. Акă мĕн çырнă вăл: «Вăрмансенче пытанса пурăнакан партизансем пире питĕ пысăк çухатусем кӳреççĕ. Пострa тăракан нумай салтаксем партизансен аллинчен вилчĕç, чылайĕшĕсем аманчĕç, вĕсем хушшинче пирĕн отделени командирĕ те. Юлашки вăхăтра пирĕн ĕçсем çакăн пек пулса кайрĕç: укрепленисемпе блиндажсене эпир туса çитеретпĕр кăна, çав вăхăтрах каялла чакма тивет».

* * *

Нимĕçсен 161-мĕш пехотнăй дивизийĕн 371 полкĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Ульрих Вернер çапла каласа панă: «Пирĕн ротăра 16 çын кăна юлнă, 2-мĕш батальонăн пĕтĕм составĕнчен те 43 çын çеç юлнă. Пирĕн полкăн личнăй составĕнчен 90 проценчĕ ытла пĕтнĕ».

* * *

Можайск районĕнчи халĕ нимĕçсенчен ирĕке кăларнă Богородск ялĕнчи колхозниксем Ушакова, Егорова, Ушаков çапла каласа панă: «Пирĕн ялта Гитлер бандичĕсем аманнă 7 красноармееца тытса илчĕç, нумай сехет хушши вĕсене шомполпа хĕнерĕç, унтан персе вĕлерчĕç».

* * *

Нимĕç оккупанчĕсем валли ĕçлекен предприятисенче высăлăха пула тата чуралла ĕç условийĕсене пула инкек-синкек пулассi кунран кунах ӳссе пырать. Брюссельри машинăсем тăвакан заводра январь уйăхĕнче 157 хутчен инкек пулнă, вĕсенчен çирĕм пиллĕкĕшĕ çынсем вилнипе вĕçленнĕ. Нимĕç çарĕ валли хĕçпăшал туса кăларакан çак заводра кăçалхи январьте ĕç тухăçлăхĕ, иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 12 процент чакнă.

* * *

Бакури чугунçул узелĕнчи машинистсем Абасовпа Агеев юлташсем пĕр уйăх хушшинче 21 пин килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

ТАСС ОПРОВЕРЖЕНИЙĔ

Гавас-ОФИ агентстви, Софирен панă передача çине кăтартса парса, Бордоран: Совет Союзĕпе Турци хушшинчи чикĕре чылаях пысăк инцидент пулса иртнĕ, тесе пĕлтерет. Çав пĕлтерӳ тăрăх, советăн Батумире вырнаçнă темиçе батальонĕ, чикĕ урлă Турци енне тарса каçакансем пек пулса, Турци территорийĕ çине кĕрсе кайма хăтланнă пулать, çавăн чухне вилнисем те пулнă пулать тата аманнă 300 красноармеец Турци территорине кĕрсе кайнă пулать.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: Гавас-ОФИ Софирен илнĕ çак пĕлтерӳ вăл малтан пуçласа вĕçне çитичченех çавтери киревсĕр те намăса пĕлмесĕр суйни пулать. Çавна агентство, хăйĕн ячĕпе кăна Франци агентстви тесе шутланаканскер, хăйĕн хуçисем—нимĕç фашисчĕсем хушнипе провоцаци тăвас шутпа шухăшласа кăларнă.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине пысăк çитĕнусемпе кĕтсе илер!

Цех коллективĕ стахановла ĕçлет

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Комбинатри Арбузов юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ отечественнăй вăрçă кунĕсенче, хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетнĕ май, лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Рабочисемпе работницăсем кирек мĕнле задание те вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçа кĕртеççĕ. Вĕсем, уйрăмăнах васкавлă заказсем парсан, вăхăта пăхмасăр, смени-смепипе цехран тухмасăр ĕçлеççĕ.

Цех коллективĕ иртнĕ çулти плана ытлашшипех тултарнă. Кăçалхи январь уйăхĕнче вăл татах та паха результатсем кăтартрĕ, уйăх планне 135 процент тултарса, цех ытти цехсенчен малла тухрĕ.

Нумаях пулмасть цехра рабочисен пухăвĕ пулчĕ. Пухура ку таранчченхи ĕçĕн хăшпĕр итогĕсем çинчен сӳтсе яврĕç.

— Тунă çитĕнӳсене çителĕклĕ теме çук, эпир татах та лайăхрах ĕçлеме пултаратпăр. Пире халь васкавлă задани пачĕç, ăна икĕ уйăх хушшинче пурнăçламалла. Татах та лайăхрах вăй хурса ĕçлесен, ман шутпа, эпир ăна кĕскерех срокра пурнăçлама пултаратпăр,— терĕ пухура цех начальникĕ.

Рабочисем ку сĕнӳпе килĕшрĕç, панă задание февралĕн 23-мĕшне—Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун тĕлне—пурнăçлама обязательство илчĕç.

Хальхи вăхăтра рабочисемпе работницăсем хушшинче ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Электросварщик Николай Моисеев январь уйăхĕн планне 200 процент, токарь Ярзаев—172 процент, тимĕрçĕ Циглер тата унăн молотобоецĕ Шишкин юлташсем—161 процент тултарнă. Çак кунсенче вĕсем нормăсене 2 хут, уйрăм кунсенче 2,5 хут ирттерсе тултараççĕ.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе слесарьсемпе строгальщиксем те начар мар ĕçлеççĕ. Слесарь Блохинпа Шоломов юлташсем январь уйăхĕнче ĕç тухăçлăхне кашниех 50 процент ӳстернĕ, юлашки вăхăтра вара вĕсем нормăна 160—180 процент тултарса пыраççĕ.

Строгальщица Федорова юлташ пĕр уйăх каярах кăна чернорабочи пулнă. Вăл кĕске вăхăт хушшинчех технологи процесне вĕренсе çитрĕ, халь станокпа хăй тĕллĕнех ĕçлет, нормăна 120—130 процент тултарать.

Арбузов юлташ ертсе пыракан цех Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илет. Цехра халь нормăна тултарса ĕçлейменнисем çук, рабочисен йышĕнчен 60 проценчĕ ытла стахановецсем.

Стахановла ĕçпе Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума пулăшатăп

Гитлерла çынçиенсем пирĕн чечек сачĕ пек ешĕрекен çĕршыв çине килсе тапăннă хыççăн, çав вăрă-хурахсене пĕтерсе тăкма тăван Хĕрлĕ Çар ретне манăн виçĕ ывăл тăчĕ. Ывăлсем фронта кайсан, эпĕ хам çине мĕнле ответлăх юлнине, тăшмана çĕнтерме ывăлсене куллен пулăшса пыма кирлине ăнланса илтĕм. Хам ваттине пăхмасăрах, колхозра пĕр ĕçрен юлмасăр тăрăшса ĕçлерĕм. Иртнĕ çул хам печчен 170 ĕçкунĕ турăм. Колхозра тăрăшса ĕçлени фронта пулăшни пулать те ĕнтĕ. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 400 грамм çăм, пĕр тир, пĕр мăшăр алшиш, пĕр алшăлли патăм.

Эпĕ 76 çулта. Çул ватă кăтартать пулсан та, манăн вăй-хăватăм чакмалла. Кирлĕ пулсан, хамăн ывăлсемпе пĕрле алла винтовка тытса урнă фашистсене хирĕç кĕрешме хатĕр. Юншăн çунакан çĕлен-калтасем пирĕн çĕршыва—мана ватăлăхра телей туса панă çĕршыва—пĕтерсе хурасшăн. Çук, пулаймĕ вăл! Пӳтсĕр тăшманăн шăпи тулса килет. Пирĕн Хĕрлĕ Çар, унăн паттăр воинĕсем нимĕç фашизмне пурпĕрех тĕп тăвĕç.

Колхозник О. МЕРКУРЬЕВ.
Сĕнтĕрвăрри р-нĕ, С. М. Киров ячĕпе тăракан колхоз.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем хатĕрлеççĕ

СĔНТĔР. «Парижская Коммуна» колхоз членĕсем тăван Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа фронтри боецсем патне парнесем яма хатĕрленеççĕ. Колхоз 20 килограмм типĕтнĕ аш-какай, 60 килограмм тулă сухарийĕ, 3 килограмм сарçу ярса парать. Уяв парни ячĕпех фронтри боецсем патне колхоз 2 мăшăр çăматă, 5 мăшăр чăлха, 10 мăшăр алшиш яма хатĕрленет.

Уйрăм колхозниксем те пĕрлешсе фронтри боецсем валли 55 килограмм сухари, 15 килограмм аш-какай яма палăртнă. Кунсăр пуçне вĕсем боецсем патне алшăллисем тата махорка чылай яраççĕ.

Çавăн пекех Урпаш ялсоветĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те фронтовиксем патне 100 килограмм ытла сухари, типĕтнĕ аш тата 50 çăмăк, 30 пачка махорка яраççĕ. Хăйсем килĕшнипе вĕсем ку парнесене Хĕвеланăç фронтĕнчи боецсем патне яма паллă тунă.

С. НАЛИМОВ.

* * *

КУКЕÇ, февралĕн 10-мĕш. (Телефонпа). Шĕнерпуçĕнчи «Молния» колхоз членĕсем пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа фронтри боецсем патне яма парнесем хатĕрлеме тытăнчĕç. Колхоз 24 килограмм сысна какайĕ, 20 чăх пĕçерсе типĕтсе тата 2 центнер хăпарту сухарийĕ хатĕрлесе яма йышăнчĕ.

Уйрăм колхозниксем те парнесем хатĕрлеççĕ. Д. Николаев, Н. Иванов колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне махорка ярса параççĕ. Комсомолка А. Иванова боецсем валли çăмса тутри, табак енчĕкĕсем тата супăнь ярса парать, Н. Данилова пĕр мăшăр перчатка яма хатĕрленет, Т. Ульяновăпа Е. Григорьева юлташсем 3 килограмм сухари тата 2 килограмм сысна ашĕ типĕтсе яма хатĕрленеççĕ.

Т. ЛОГИНОВ.

Вăрман хатĕрлемелле, турттармалла

ВĂРНАР. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вăрман хатĕрлев планне срокчен тултарни çавтери пысăк вырăн йышăнса тăрать. Районра малта пыракан колхозсем вăрман хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе юлашки вăхăтра чылаях ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Сăмахран, Кĕçтемĕртри Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕсем иртнĕ çулсенче те вăрман хатĕрлевĕнче малта пынă. Вĕсем кашни çул государствăна планран ирттерсе темиçе çĕршер кубометр вутă хатĕрлесе панă. Çав колхоз членĕсем çак ĕçе кăçал та тимлĕн туса пыраççĕ. Паянхи куна вăрман каснă çĕрте 30 çын, хатĕрленине складсене турттарнă çĕрте 10 çын ĕçлет. Колхозниксем ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек йĕркеленĕ. Вĕсем ирех, шуçăм çуттипех ĕçе каяççĕ. Ĕçрен каçхине, хĕвел ансан таврăнаççĕ. Вăрманта ĕçлекенсем валли колхоз столовăй туса панă. Çапла туни ĕç тухăçлăхĕ ӳсме пуçларĕ. Н. Степанов, А. Филиппов, Заяков юлташсем ĕç нормине кашни кунах 100—150-шар процент таран тултарса пыраççĕ. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче агитаторсем кашни кунах политинформацисем туса ирттереççĕ. Çавăн пекех Кольцовка, Пăваяль, Хапăс, Пăртас колхоз членĕсем те вăрман касса турттарас ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Паянхи куна вăрман каснă çĕрте ĕçлекенсем 210 çынна, турттаракансем 65 çынна çитрĕç. Вĕсем хушшинче Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна пысăк çĕнтерӳсемпе кĕтсе илессишĕн ăмăртăва анлăн сарса янă.

Вăрман касса хатĕрленĕ çĕрте уйрăм звеносем организациленĕ. Арçынсемпе хĕрарăмсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарнă. Çавăн пек ĕçленипе пулă нумайăшĕсем ĕç нормине 160—170 процент таран тултараççĕ. Сăмахран, А. Фролова колхозница кашни кун 3—4 кубла метр вутă турттарать.

Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозра вăрман турттаракансен лашисене пăхма, ăнсăртран çунасем çĕмĕрĕлсен вĕсене юсама тата лаша хатĕрĕсене юсавлă тытма вăрмана уйрăм çын янă. Вăл ĕçре П. Першуткин юлташ лайăх ĕçлет. Çавăн пекех пăчкăсемпе пуртăсене хăйраса пама та уйрăм çын уйăрнă.

Калас пулать, вăрман хатĕрлес тата турттарас ĕçе хăшпĕр колхозсем пачах та çителĕксĕр туса пыраççĕ-ха. Мамалай, Ерçипуç, Кушлавăш, Хирпуç, Рунга, Хоронсор колхозĕсенчи колхозниксем декабрь уйăхĕнче тата январĕн малтанхи кунĕсенче вăрманта пĕр кун та пулман. Çакăн пек йĕркесĕрлĕхсемпе колхоз председателĕсем те килĕшсе лараççĕ. Кая юлса пыракан колхозсен вăрман хатĕрлев планне тултарассишĕн тата малта пыракан колхозсемпе танлашассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлес пулать.

Н. ЗАХАРОВ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Паттăр боецсемпе командирсем парти ретне кĕреççĕ

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 8-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче Хĕрлĕ Çарăн [illegible] Тăван çĕршыва сыхлас идея [illegible] паттăрла [illegible] тарать. Паттăррисенчен те паттăррисем, хăйсем тăван çĕршыва чĕререн парăнăннине кăтартнăскерсем, хăйсен пурнăçне Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕпе çыхăнтараççĕ, ВКП(б) членĕсен ретне кĕреççĕ.

Иртнĕ кунсенче çак йышăр танкăн водителĕ Гнашев юлташа парти билечĕ панă. Юлашки çапăçусенче пĕринче çак хăрама пĕлмен боец, противникăн вăл çирĕплетнĕ районне пуринчен малтан çĕмĕрсе кĕнĕ те, хăйĕн боевой машинин йывăрăшĕпе нимĕçсен танксене хирĕç пемелли темиçе туппине лутăркаса тăкнă, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 20 çынна ытла вĕлернĕ.

Çавнашкалах тата Н-ски авиачаçăн штурман стрелокĕ Фищенко юлташ парти билечĕ илнĕ. Вăл боевой заданисем илсе тăшман тылне 130 хут ытла вĕçсе кайнă. Фищенко юлташ, пулеметран тĕл персе, çĕршер нимĕç окупанчĕсене вырăнтах çĕре çитиччен вилĕм тупса панă. [illegible] Совет правительстви паттăр штурмана [illegible] Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Лейтенант Байдарицева, боецсене Синичкенкова, Тимченкова, Голенкина кандидат карточкисем панă. Вĕсем отечественнăй аслă вăрçăн чăн-чăн геройĕсем пулса тăнине пĕтĕм часть пĕлет.

Хĕвеланăç фронтĕнчи чаçсен парти организацийĕсене отечественнăй аслă вăрçăн геройĕсенчен пиншер заявленисем пырса тăраççĕ. Тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре совет воинĕсем большевиксен мухтавлă ятне тивĕçлипех кăтартса параççĕ.

Узбек халăхĕн паттăр ывăлĕ Кучкар Ахмед Дургиев

КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). Дургиев красноармеец тунă паттăрла ĕç çинчен калакан чаплă хыпар пĕтĕм фрончĕпе саралчĕ. Ку чаплă ĕç çинчен кĕскен Совет Информаци Бюровĕ те пĕлтерчĕ.

Ĕç ак мĕнле пулса иртнĕ.

Дургиев çĕрле хăйне разведкăна яма ыйтнă. Пана задание вăл калама çук лайăх туса килнĕ, кирлĕ сведенисене йăлтах илсе таврăннă. Çав даннăйсем ирхине атака тума пирĕн чаçа питех те пулăшнă вара. Командир «тăван çĕршывшăн, малалла!» тесе кăшкăрса ярсанах, Дургиев пуринчен малтан çапăçăва ыткăннă, тăшманăн ДЗОТ-не çĕмĕрсе кĕнĕ. Совет боецĕ тăшман салтакĕсем хушшинче пĕччен кăна пулнă. Анчах та Дургиевăн шикленсе хăраса тăрасси пулман. Пирвайхи гитлеровеца вăл прикладпа çапса лапчăтнă та тăшман пулеметчикĕсем çине ыткăннă. Лешсем пулеметсенчен тамăкри пек çунтарса тăнă, пирĕн пехотăна малалла куçма паман. Хăйсем патне красноармеец пырса çитнине курсан, фашистсем пулеметĕсене пăрахса сиксе тăраççĕ те Дургиева тапăнаççĕ. Хаяр тытăçура Дургиевăн винтовки ванса каять. Анчах совет улăпне ку та чарма пултарайман. Вăл çавăнтах нимĕç салтакĕн аллинчи винтовкăна туртса илет те çав винтовкăран пит те хăвăрттăн темиçе хутчен тĕл персе ярать, кашни пульли гитлеровецсене вĕлермеллех пыра-пыра лекет.

Майлă самант тупса Дургиев ДЗОТ-ран сиксе тухать те çавăнтах аллисенче гранатăсем тытса ДЗОТ-а каялла çĕмĕрсе кĕрет. Анчах Дургиев çакăнти фашистсен бандине пĕтĕмĕшпех сирпĕтсе ярас тесе граната пăрахма аллине сулса яма ĕлкĕрет кăна, çав самантра ун çине нимĕç офицерĕ тапăнать. Дургиев темĕнле самантра пиçиххи çумĕнчен кĕреçе туртса кăларать те гитлеровецăн аллинчи револьвера çапса ӳкерет. Офицер урнă тискер кайăк пек пулса кайса красноармееца ярса илет, анчах красноармеецăн хăватлă аллисем ăна çав секундăрах вĕлерсе пăрахаççĕ.

Ыттисем—пĕр унтер-офицер, икĕ салтак—аллисене çӳлелле çĕклеççĕ. Дургиев, вĕсене виççĕшне те хăй чаçне илсе пырса, трофейăсемпе тата хаклă документсемпе пĕрле, командовани аллине парать.

Чаплă герой Кучкар Ахмед Дургиев—узбек халăхĕн паттăр ывăлĕ. Вăрçăччен вăл Фергана облаçĕнче «Первая Пятилетка» колхозра чабан пулса ĕçленĕ. Халĕ Дургиева старший сержант званине панă.

Л. РОДОВ.

Степан Волковăн юлашки сăмахĕ

Часть наступлени тума хатĕрленнĕ. Красноармеец Волков тăракан стрелковăй ротăн атакăна чи малтан кĕрсе каймалла тата халăх пурăнакан пункта штурмпа илмелле пулнă. Атакăна кайма хатĕрленсе çитсен, Волков кăсъинчен пĕчĕк блок-нот кăларнă та, юр айне пулнă тунката çине ларса, васкавлăн çырма тытăннă. Унтан çырса пĕтернĕ хута блок-нотран татса илнĕ те, пăнса хытнă аллисемпе хуçлатса, медальон ăшне чикнĕ.

Çапăçу пуçланнă. Волков пĕрремĕш колоннăра пынă. Вăл хăйĕн винтовкинчен 4 фашиста персе ӳкернĕ. Унтан вăл ДЗОТ патне шăвăнса пынă та, гранатăсем вăркăнтарса, татах 6 салтакпа офицера пĕтерсе тăкнă. Пирĕн ротăна малалла кайма чăрмантаракан огневой точкăна çапла çапса аркатнă. Пирĕн малти колоннăсем Устиново ялне кĕме тытăннă. Çак самантра тăшманăн пульли хастар красноармеец Волковăн пурнăçне татнă.

Çапăçу хыççăн красноармеецсем Волков кăсъинчен медальон кăларнă та Волков атака пуçланиччен кăна çырса хăварнă çырăва илнĕ. Çакă вăл совет воинĕн—хăюллă патриотăн юлашки сăмахĕ пулнă. Çак хута та вăл «Манăн юлашки сăмах» тесе ят панă. Унта Волков хăйĕн çапăçури тусĕсене чĕнсе çапла çырнă:

«Юлташсем—боецсемпе командирсем тата политработниксем! Атакăна кĕрес умĕн эпĕ хамăрăн тăван анне пулса тăракан çĕршывăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн юлашки сывлăш тухиччен çапăçма тупа тăватăп. Хам эпĕ партире тăман çын. Анчах та çапăçура манăн юнăм тăкăнать пулсассăн, ан манăр: эпĕ—юнăмпа коммунист. Пирĕн тăван çĕршывăн таса кăкăрне килсе тапăнса ирсĕрленĕ фашистла палачсене—вилĕм те ĕмĕрлĕхех ылхав!

Çапăçури хаклă тăвансем! Çак çапăçура мана вилме тӳр килсессĕн, мана коммунист-сталинец тесе хисеплĕр. Тĕнчери социализмлă пĕрремĕш государствăн çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пыракан аслă совет халăхĕ сывă пултăр! Манăн арăма Марусьăна тата хĕрĕме Таньăна манран салам калăр. С. Волков».

Батальоннăй комиссар ХАРИТОНЕНКО.
(«Правда», февралĕн 12-мĕш).

ССР Союзĕн шалти вăйĕ

Иранра тухса тăракан хаçат совет халăхĕн шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчи вăйĕ çинчен

ТЕГЕРАН, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). «Иран» хаçат «ССР Союзĕн шалти вăйĕ» ятлă статья пичетлесе кăларнă. Гитлерла. Германие хирĕç пыракан кĕрешӳре ССР Союзĕ ăнăçусем тунин сăлтавĕ — Совет халăхĕ шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен пит те вăйлă пулни пулса тăрать, тесе палăртать автор Рахим Заде Сафени. Вăрçă пуçланиччен темиçе кун маларах, — тесе çырать автор, — Хĕвеланăç Европăри политикăллă деятельсенчен: эсир ССР Союзĕн вăйĕсене мĕнле хаклатăр, тесе ыйтсан, вĕсем: пятилетка планĕсене пурнăçа кĕртнине пула, унта хĕçпăшал, апат-çимĕç, фабрикăсем, заводсем; нефть... нумай, тесе палăртнă пулĕччĕç. Анчах та ун çумне, — тесе çырать хаçат, — ССР Союзĕнче правительствăпа килĕшмен çынсен пĕр группи те çуккине хушмалла. ССР Союзĕнче пулса курнă ученăйсем, писательсем тата çулçӳревçĕсем те çавăн çинченех каласа параççĕ. Совет влаçĕн вăйĕ унăн халăхĕ шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен вăйлă пулнинчен килнине вĕсем хăйсемех курса ĕненнĕ. Вырăс халăхĕ паттăр, хăюллă пулнине, вăл хăйĕн тăван çĕршывне юратнине эпир пĕлетпĕр. ССР Союзĕнче правительствăпа парти руководителĕсем халăха воспитани парас тĕлĕшпе тăтăшах ĕçлесе пынă, халĕ ĕнтĕ совет обществи 24 çул хушшинче питĕ паха воспитани илнĕ çынсенчен тăрать. Вĕсем пурте Российăна ĕççынисен аслă çемьин пĕрлĕхлĕ тăван çĕршывĕ тесе шутлаççĕ. Вырăс халăхĕн шанчăкĕ питĕ пысăк, çавăнпа та вăл сивĕ юртан та, вĕри пульăран та хăрамасть. Вырăссем, тăшманăн окопĕсем патне çитес тесе, вилĕмрен хăрамасăр малалла каяççĕ. Нимĕçсен командованийĕ ĕнтĕ шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен çак вăя шута илмен.

Иранри хаçат-журналсем союзлă договор тунине ырлаççĕ

ТЕГЕРАН, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). Тегеранра тухса тăракан хаçат-журналсем халĕ те СССР, Великобритани тата Иран хушшинче тунă союзлă договора ырласа, ун çинчен ăнлантарса çыраççĕ. Пур хаçатсем те «Правда» тата «Известия» хаçатсенче çав договор çинчен тухнă умстатьясене куçарса пичетлесе кăларнă.

Рузвельт çĕнĕрен укçа-тенкĕ хушса пама сĕнӳ тăратнă

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельт конгреса хĕçпăшала кивçен е арендăна парас программăна пурнăçласа пыма çĕнĕрен 5430 миллион доллар хушса памашкăн конгреса сĕнӳ тăратнă.

Великобританире производство министерстви тунă

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Премьер-министр Черчилль общинăсен палатин ларăвĕнче çĕнĕ министерствăн — производство министерствин функцийĕсем çинчен каласа панă. Çав министерствăна ертсе пыма лорд Бивербрука лартнă.

1941 çулти сентябрь уйăхĕнче, тенĕ Черчилль, çар снабженин министерстви Çар промышленноçĕн министерстви тата тинĕс министерстви çумĕнчи контроль департаменчĕ умĕнче тăракан пĕтĕмĕшлĕ задачăсене пурнăçа кĕртсе пыма пĕрлештернĕ орган тунă. Анчах та Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем вăрçа хутшăнни, Англин тата Америкăн ресурсĕсене пĕрлештерес тĕлĕшпе пысăк мероприятисем йышăнни, Дональд Нельсона Америкăри мĕнпур промышленноçа ертсе пыма лартни,—çаксем ĕнтĕ Англире те производство ĕçĕсене ертсе пыма уйрăм министерство тăвас ыйтăва кăларса тăратнă. Çак министерствăна ертсе пыракан руководительсен положенийĕ Дональд Нельсон йышăнса тăракан положени пекех пулмалла. Черчилль çапла кăтартса панă: производство министерстви хăйĕн ĕçĕсене туса пыма тытăннă хыççăн ытти пур министерствăсем те хăйсен ĕçĕсене çав-çавах туса пыраççĕ, вĕсен руководителĕсем те хăйсен вырăнĕсенчех юлаççĕ. Бивербрук вĕсене пĕтĕмĕшлĕн ертсе пырать, вĕсен ĕçĕсене пĕтĕçтерсе, йĕркелесе пыраканĕ пулать. Тинĕс министерстви çумĕнчи контроль департаменчĕ, çар карапĕсен конструкцийĕсене тата тинĕс-çар программине çирĕплетес ыйтусемсĕр пуçне, çĕнĕ министерствăна пăхăнать. Суту-илӳ министерствипе строительство ĕçĕсен министерствин распределени функцийĕсем те производство министерствине пăхăнаççĕ.

Ĕнер Лондонра «Шурă кĕнеке» пичетлесе кăларнă. Çав кĕнекере çĕнĕ министерствăн — производство министерствин ĕçĕсем çинчен каласа панă.

Тодт темĕнле ĕненмелле мар майпа вилни çинчен Америкăри хаçатсем мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). Тодт авиацире катастрофа пулнă пирки вилнĕ тесе Германире кăларнă пĕлтерӳсене Америкăри хаçатсем ĕненмесĕртерех тăраççĕ. «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: «Юлашки вăхăтра катастрофăсем пулса тата чирлесе Германин паллă деятелĕсем нумай пĕтме пуçланă май, çавăн пирки тĕпĕ-йĕрĕпех пĕлсе çитиччен Тодт мĕнле обстоятельствăра вилни çинчен Германире пĕлтернисене ĕненмесĕртерех тăма та тивет».

«Тодт темĕнле питĕ те ĕненмелле мар майпа вилнĕ» тесе паллă тăвать «П. М.» хаçат. Хаçат çавăнпа пĕрлех тата юлашки вăхăтра Германири нумай генералсем хăйсен вилĕмĕпе вилнĕ тесе каланине ĕненсех çитерме йывăр тесе паллă тăвать.

Францин „Нормандия" парохочĕ çинче пушар пулнă

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем Францин Нью-Йорк портĕнче тăракан «Нормандия» ятлă питĕ те пысăк парохочĕ çинче пушар пулни çинчен пĕлтереççĕ. Вăйлă çил тăнă пулин те, пожарнăйсем пушара сӳнтерсе лартма пултарнă. «Нормандия» пароходăн водоизмещенийĕ 83.000 тонна. Иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви Францин ытти 13 суту-илӳ суднисемпе пĕрле çак парохода та конфискацилленĕ пулнă.

Италири лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Дейли миррор» хаçат Интернейшел ньюс агентствин Римри корреспонденчĕ пулнă çыннăн, Италия ССР Союзне хирĕç вăрçă пуçличчен нумаях та мар маларах Италирен тухса кайнăскерĕн, статьисене пичетлет. Çав корреспондент Италири хĕрарăмсемпе ача-пăчасем выçăхса çитнипе урамрах ӳкнине час-часах курма пулать, тесе çырать. Госпитальсенче пăсăк апат-çимĕç тата пĕрлĕрен суррогатсем çинипе сусăрланнă çынсем туллиех выртаççĕ.

Малалла корреспондент çапла çырать: Италин тинĕс-çар офицерĕсенчен нумайĕшĕсем каланă тăрăх, командованин ĕçĕсене Муссолини хутшăннă пирки пулма пултаракан ăнăçсăрлăхсемшĕн ответа хăй çине илес мар тесе, Кованьяри адмирал тинĕс министрĕн заместителĕн постĕнчен отставкăна тухнă.

«Лайф» журнал Италирен октябрь уйăхĕнче тухса килнĕ çыннăн статьине пичетлесе кăларнă. Ку статьяра автор çапла çырать: Итали халăхĕн 85 процентĕ фашистсене хирĕçле шухăшланине Италири хăшпĕр официальнăй çынсем те йышăнаççĕ. Çĕршывра фашистсене хирĕç кĕрешекен группăсем тунă; автор сăмахĕпе, çав группăсем çĕршер пин активлă членсене пĕрлештерсе тăраççĕ, вĕсен вăрттăн ĕçлекен радиостанцисем те пур. Италире чăн-чăн хуçасем нимĕçсем пулса тăни халăха татах та ытларах тарăхтарать. Германи посолĕ Макензин Римра хăйне хăй чăн-чăн хуçа пекех тыткалать. Италире гестапо агенчĕсем 25 пин çын шутланаççĕ. 12 пин нимĕç Италири чугунçулсем çинче хуçаланаççĕ. Кунсăр пуçне, Италире промышленноçăн мĕнпур паллăрах предприятийĕсене хăйсен аллинче тытса тăракан нимĕç «специалисчĕсем» 8 пин çын пурăнаççĕ. Рим çывăхĕнчи Консерн Бред заводĕнчен нимĕçсен Ливире сиенленнĕ самолечĕсене юсамалли завод туса хунă. Итали рабочийĕсене 600 пин çынна ирĕксĕрлесех Германие ĕçлеме ăсатнă.

Чан Кай-ши Индие кайни

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, генералиссимус Чан Кай-ши, хăйĕн арăмĕпе тата хăй патĕнче штатра тăракан 15 офицерпа пĕрле Делие çитнĕ. Чан Кай-ши, хăйпе пынă çынсемпе пĕрле, Инди вице-королĕн Линлистгоун хăни пулса темиçе кун хушши пурăнать. Вĕсем пĕр-пĕрне интереслентерекен ыйтусене сӳтсе-явма шутлаççĕ. Чан Кай-ши Индие кайса Индири лидерсемпе тĕл пулса калаçма шутлать.

Генералиссимуса хисеплесе тунă йышăнура лорд Линлистгоу çапла каланă: çак тĕлпулу 800 миллион çынран, урăхла каласан, тĕнчери мĕнпур халăхăн виçĕ пайĕнчен пĕр пайне пĕрлештерсе тăракан икĕ аслă халăхăн юлташлăхне çирĕплетет, тенĕ. Хăйĕн ответĕнче Чан Кай-ши вăл Индие килнин тĕллевĕ агрессие хирĕç пыракан кĕрешӳре вăйсене пĕрлештерес ыйту тăрăх Инди правительствипе консультаци тăвасси пулса тăрать, тенĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Делирен пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине унта генерал Уэйвелл пынă. Вăл паянах, кăнтăрла иртсен, Чан Кай-шипе тĕл пулса калаçасса кĕтеççĕ. Çавнашкалах паян ирхине Делие Индири национальнăй конгресăн лидерĕ Джавахарлал Неру çитнĕ. Неру Чан Кай-шипе тĕл пулса калаçма шутлать.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

(НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар ĕç министерствин коммюникинче çапла каланă: Батаан çурутравĕ çинче (Лусон утравĕ) Америкăпа Филиппин войскисем фронтăн сулахай флангĕнче контратака тунă, çавăнта Японин фронт линийĕ витĕр сăрхăнса кĕнĕ войскисен юлашкийĕсене пĕтерсе тăкнă. Америка артиллерийĕ японецсене Батаан çурутравĕн хĕвеланăç енчи сыранне анса юлма паман.

Япони командованийĕ фронта çĕнĕ вăйсем нумай ярса тăрать. Фронтра халĕ Японин 5 дивизийĕ çапăçать. Кунсăр пуçне тата пĕр дивизи коммуникаци линийĕсене сыхласа тăрать. Лингайен заливĕнче Японин çĕнĕ подкреплениййĕсем ăна-ăна юлаççĕ. Çаксем вĕсем пурте Америкăпа Филиппин войскисене хирĕç противникăн йыш тĕлĕшпе чылай пысăк чаçĕсем кĕрешнине кăтартса параççĕ.

Иртнĕ талăк хушшинче Америка войскисем Японецсен 7 самолетне персе антарнă. Çапла вара, вăрçă пуçланнăранпа Филиппин çинче Японин 163 самолетне пĕтерсе тăкнă. Январĕн 29-мĕшĕнче Гавай утравĕсен районĕнче Японин подводнăй лодки Америкăн 224 тонна водоизмещениллĕ пысăках мар çар транспортне путарнă.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Сингапур утравĕ çинче çапăçусем пыраççĕ. Японецсем хула еннелле—кăнтăралла куçса пыма хăтланаççĕ. Анчах та вĕсене хирĕç Англи чаçĕсем вăйлăн тăраççĕ. Сингапура штурмлама японецсем 3 дивизи янă пулмалла. Утравăн положенийĕ йывăр темелле тата çав крепоçăн малашлăхĕ мĕнле пуласси çитес сывăх кунсенчех паллă пулать пулмалла.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИСЕМ

БАТАВИЯ, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: японецсем Целебес утравĕн Кăнтăр-Хĕвеланăç енчи çыранĕнче Макассар хулин районĕнче, çавăн пекех тата Баланга, Дженепонт, Барамбонг районĕнче десант антарса хăвараççĕ. Хăшпĕр районсенче Япони авиацийĕ кĕрешĕве хутшăнни палăрнă.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Официальнăй сведенисем тăрăх, Японин Сингапур утравĕ çинче çапăçакан войскисем хуларан 9 километрта Букит—Тимах текен чи çӳллĕ вырăна йышăнса илнĕ. Çав вырăн çинчен Сингапур хули курăнса ларать. Япони войскисем малалла наступлени туса пыраççĕ.

Китайри вăрçă

Китайра уйрăмах вăйлă операцисем халĕ Кантонран хĕвелтухăçнерех—Кантон провинцинче пулса иртеççĕ. Китай войскисем, Вэйчжоу, Боло хулисене çĕнĕрен йышăнса илнĕ хыççăн, японецсене Кантон—Коулун чугунçул çинчи Шилун еннелле хĕссе пыраççĕ. Çапăçусем Дунцзян юханшывĕн Кăнтăр тата çурçĕр енчи çыранĕсенче пыраççĕ. (ТАСС, февралĕн 11-мĕш).

Ливири вăрçă

Англин тата Германипе Италин Ливире пулнă çухатăвĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çар министрĕн заместителĕ Григ, общинăсен палатинче панă ыйтусем çине ответлесе, çапла каланă: Ливири юлашки çапăçусенче Англин, вилнисемпе аманнисене тата тыткăна лекнисене пĕрле шутласан, 18 пин çын пĕтнĕ. Вилнисем 2.980 çын. Çав вăхăтрах тăшманăн çухатăвĕсем çакнашкал: нимĕçсен 11.500 вилнĕ тата аманнă, итальянецсен 13 пин çын пĕтнĕ. Англи войскисем противникăн 35.500 салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованин черетлĕ коммюникинче: февралĕн 10-мĕшĕнче фронтăн пĕтĕмĕшлĕ положенийĕнче нимĕнле улшăнусемех те пулман, тесе кăтартса панă.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине финплана срокчен тултарнипе кĕтсе илер

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине фронтра та, тылра та паттăрла ĕçсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Тыл фронта параканн пулăшу кунран кун ӳссе пырать. Фашистсен урса кайнă йыткĕтĕвĕсене хăвăртрах аркатса, пĕтерсе тăкас тесе, совет халăхĕ хăйĕн мĕнпур вăйне хурса кĕрешет.

Финанс работникĕсем умĕнче, финанс активĕ умĕнче, пирĕн çĕршыври мĕнпур патриотсем умĕнче хальхи вăхăтра тăракан ответлă та мухтавлă задача—Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн вăй-хăватне çирĕплетме ытларах та ытларах укçа-тенкĕ парасси пулса тăрать.

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1941 çулти декабрĕн 29-мĕшĕнче кăларнă указĕ тăрăх, вăрçă вăхăтĕнчи налог тунă. Çак налогăн пур суммисем те Хĕрлĕ Çарăн боевой вăй-хăватне çирĕплетнĕ çĕре каяççĕ. Çавăнпа та пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕççыннисем правительствăн çак решенине хапăл туса йышăнтĕç.

Вăрçă вăхăтĕнчи налога срокчен тӳлени вăл фашистла ирсĕрсене хирĕç пыракан вăрçă фронтне çĕнĕ танксем, самолетсем, минометсем, тупăсем, пулеметсем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем ытларах та хăвăртрах туса пани пулнине Чăваш республикинчи ĕççыннисем пĕлсе тăраççĕ. Пирĕн республикăри нумай ялсовечĕсенчи совет патриочĕсем срокченех, извещенисем илессине кĕтмесĕрех, вăрçă налогне пĕтĕмпех тӳлесе татаççĕ. Çапла, сăмахран, Канаш районĕнче январь уйăхĕн юлашки виçтăват кунĕ хушшинче вăрçă налогне срокченех 117 пин тенкĕ тӳленĕ. Çакнашкал тĕслĕхсем республикăн ытти районĕсенче те пур.

Вăрçă вăхăчĕ финанс работникĕсенчен укçа-тенкĕ законĕсене, чи малтанах вăрçă вăхăтĕнчи налог çинчен кăларнă закона, хăвăрт та тĕплĕн пурнăçа кĕртсе пыма ыйтать. Вăрçă вăхăтĕнчи налога тӳлекен кашни çынна тивĕçекен налог суммине вăхăтра шутласа, извещение вăхăтра памалла, çар службинчи çынсен çемйисене, инвалидсене тата урăх сăлтавсене пула законра палăртнă льготăсемпе усă курма тивĕçлĕ çынсене пур çăмăллăхсене те памалла, закона пăсассине питĕ хытă асăрхаса тăмалла, ялта массăллă-политикăллă ĕçе сарса янипе налога срокченех пухас ĕçе организацилемелле.

Хальхи вăхăтра районсенчи партипе совет органĕсен, ертсе пыракан работниксен финанс тĕлĕшпе ĕçлекен работниксене нихăçанхинчен ытларах пулăшу памалла.

Чăваш республикинчи финанс работникĕсем январь уйăхĕн вĕçĕнче Шупашкарта тата Канашра пулса иртнĕ хăйсен кустовой канашлăвĕсенче иртнĕ çулти финанс ĕçĕн итогĕсене пăхса тухнă тата 1942 çулти 1-мĕш кварталăн финпланне тултарас ыйтăва сӳтсе-явнă май, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине çакăн пек конкретнăй обязательство илнĕ: Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле, ялта массăллă-политикăллă ĕçе анлăн сарса, ялсем тăрăх пухма палăртнă вăрçă вăхăтĕнчи налог укçине сахалтан та 45 процент пухмалла. Çакăнпа пĕрлех обязательнăй йĕркепе 1941 çулта тӳлемелле пулнă, анчах вăхăтра тӳлесе татман пур тĕрлĕ парăмсене те пухса çитерме, ялта пухмалли культсбор укçисене срокчен пухса çитерме, 1-мĕш квартал планĕ тăрăх колхозниксенчен укçан тивĕçекен подоходнăй налога пухса çитерме, самообложени укçисене срокчен пухса çитерме, колхозниксемпе единоличниксенчен заем укçине пухса çитерме, хулари халăхран çуртйĕршĕн илекен налогпа çĕр рентине сахалтан та 80 процент таран пухма обязательство илнĕ.

Çак илнĕ обязательствăсене Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле ăнăçлăн пурнăçа кĕртни ĕнтĕ Чăваш республикинчи ĕççыннисем Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн мухтавлă боецĕсене панă чи пысăк парнесенчен пĕри пулса тăрать.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кунччен халĕ илнĕ обязательствăсене тултарма çеç мар, чылай ирттерсе тултарма та вăхăт пур-ха. Финанс планне тултарас хăвăртлăх кунран кун ӳссе пымалла. Кашни финанс работникĕн: налог инспекторĕн, налог агенчĕн ĕçне вăл кашни кун мĕн туни тăрăх, обязательнăй йĕркепе тӳлемелли парăмсене татни тăрăх тата ĕççыннисем хăйсен ирĕкĕпе çĕршыв оборонине тĕреклетме кашни кун мĕн чухлĕ укçа хывни тăрăх хакламалла. Ялти финанс активĕн хальхи вăхăтра финплана срокчен тултарас тĕлĕшпе нихăçанхинчен те ытларах тăрăшса ĕçлемелле.

Укçа-тенкĕ мобилизацилес плана тултарас тĕлĕшпе республикăри хăшпĕр районсем: Красноармейски, Чкаловски, Калинински, Вăрмар, Шăхасан, Елчĕк тата ытти районсем те чылай пысăк çитĕнӳсем тунă. Анчах та çакăнпа лăпланса лармалла мар. Пĕтĕмĕшпе илсен, вĕсен финплана тултарасси япăх пымасть пулин те, çапах та çитменлĕхсем пур-ха. Районсенче обязательнăй йĕркепе тӳлемелли парăмсене татас тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те туман-ха, финанс активĕпе çителĕклĕ ĕçлесе пымаççĕ, финанс ĕçне хĕрарăм-активисткăсене сахал явăçтараççĕ, районри хăшпĕр ялсовечĕсем финанс ĕçĕпе питĕ кая юлса пыраççĕ. Çак районсен февралĕн 1-мĕш тĕлне финанс планне татах та ăнăçлăрах тултарма пур условисем те пулнă.

Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле, Йĕпреç, Кувакино тата ытти районсенче финанс ĕçĕ питех те кая юлса пырать. Кунта районри партипе совет органĕсене ертсе пыракан работниксем финанс ĕçне тивĕçлĕ хак паманни, ĕçсыннисем хушшинче агитаципе массăллă-политикăллă ĕçе çителĕксĕр туса пыни, финанс активĕпе сахал ĕçлени палăрать. Кая юлса пыракан районсен вăраха ямасăрах хăйсен ĕçне тĕпрен лайăхлатса йĕркелемелле, финанс ĕçне ялти актива, чи малтанах хĕрарăмсене явăçтармалла, çапла тӳлесе татман пур парăмсене те çывăх кунсенчех пухса çитерсе, малашнехи вăхăтсенче тӳлемелли парăмсене те срокчен пухма тытăнмалла.

Малашне республикăра финплана тултарас тĕлĕшпе кая юлса пыракан пĕр ялсовечĕ те, пĕр колхоз та пулмалла мар. Вăрçă условийĕнче парăмсене государствăна вăхăтра тӳлесе татманни вăл сиенлĕ ĕç туни пулать.

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар тăшмана паттăррăн аркатса, пĕтерсе пырать.

Совет ĕççыннийĕсем тылра та çавнашкалах хăйсен мĕнпур вăйне хурса ĕçлеççĕ; хăйсен мĕнпур вăйĕпе средствисене ылханлă фашизма хирĕç кĕрешес ĕçе параççĕ. Совет халăхĕн отечественнăй аслă вăрçине активлăн хутшăнма кашни совет çыннине питĕ анлă майсем туса панă, çак майсемпе ĕнтĕ кирлĕ таран хăвăртрах усă курмалла. Çакă ĕнтĕ совет воинĕсемпĕн чи лайăх парне пулса тăрать. Çакă ĕнтĕ вĕсене паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума, фашистсен урса кайнă йыткĕтĕвĕсене хăвăртрах аркатса пĕтерсе тăкма ытларах та ытларах хавхалантарĕ.

В. ТАВРИН.
ЧАССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ.

Пĕлтерӳ

Февралĕн 13-мĕшĕнче, 18 сехетрен пуçласа 20 сехетчен, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн агитпунктĕнче докладчиксем, агитаторсем, беседчиксем валли консультаци пулать. Консультаци теми: **«Гитлерла захватчиксен Германири тылĕ тĕрексĕр».**

Консультант — ВКП(б) хула комитечĕн лекторĕ **Виноградова** юлташ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа партии пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0— , издательство конторин — 0—23.

НТ 47 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф: 6. 58 64 п: л: